# Кулăш журналĕ – чыс-хисеп халалĕ

«Капкăна» алла илсен
Кĕрхи кун чечекленет:
Култарать, тĕлĕнтерет,
Çивĕч сăмахпа йĕплет.




С.Мягков ÿкерчĕкĕ

Хакĕ ирĕклĕ


2014 • 17 №
АВĂН – СЕНТЯБРЬ
ХЫПАР


# КАПКĂН

16+

С.Мягков ÿкерчĕкĕ



**Çемье – пурнăç тыткăчи.**
**Кам кама парăнтарать?**

Борьба за ячейку общества.
Кто кого – покажет время.

КАПКĂН
Сатирăпа кулăш журналĕ
1925 çулхи пуш уйăхĕн
16-мĕшĕнче тухма пуçланă
17 (1611)№
авăн (сентябрь)

Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Директор-тĕп редактор
А.П. Леонтьев

Редактор – Н.П. Петров

Художник – С.Б.Мягков
Калăплавçă –
Е.А.Трофимова

Журнала почта уйрăмĕсенче, «Чăваш пичет» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче, редакцире çулталăкĕпех çырăнтараççĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00308 номерпе регистрациленĕ.

Индекс – 24608
Пичете алă пуснă: 1.09.2014
Пичетленĕ: 8.09.2014
Хут формачĕ 60х84/8
Усл.п.л. 1,5
Тираж 1745 экз.
Заказ К-1618
Ыйтмалли телефонсем:
56-09-31, 56-00-67, 62-50-06.
Редакципе издатель адресĕ:
428019, Шупашкар хули,
Иван Яковлев пр., 13.
факс: (8352) 62-50-06, 28-83-70

www.hypar.ru
e-mail: atal-volga@mail.ru
Журнала «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, тавăрса памаççĕ. Журналăн юрăхсăр экземплярĕсем тĕл пулсан издательство типографине пĕлтермелле.
Кунти материалсене «Капкăнран» илнине асăнмасăр тепĕр хут усă курма юрамасть.

## Шкула
## В школу




## Шкултан
## Из школы




С. Мягков ÿкерчĕкĕ

**– Урамра аван!..**
– На улице лучше!..




**Çĕнĕ маршрут уçни.**

Открытие дополнительного маршрута.

С. Мягков ÿкерчĕкĕ




**– Пап, а ты кого хотел? Мальчика или девочку?**
**– Я вообще хотел просто маму.**

С. Петрова ÿкерчĕкĕ

# Ĕнине кура пурнăçĕ



Сĕт пухакансем хресченрен мăшкăллансă пекех туйăнать, – час-часах çапла каланине илтме пулать ялсене тухсан. Шутлăр-ха: 11-12 тенкĕ кама тивĕçтертĕр? Хĕл кунĕсенче те пысăк пулман вăл. Халĕ, ĕне сĕт нумай антарнă тапхăрта, çынсене хавхалантарас вырăнне пĕчĕк хак сĕнеççĕ. Ĕнене сутас шухăшлисем пур. Пĕрре сутсан тепре туянма çав тери йывăр. Шел те, эпир хаксене витĕм кӳрейместпĕр. Каплах пулса пырсан ĕне йышĕ чакĕ.

Çакнашкал лару-тăру пирки Чăваш Ен Пуçлăхĕ çумĕнчи Экономика Канашĕпе агропромышленноç комплексĕн ыйтăвĕсемпе ĕçлекен Правительство комиссийĕн пĕрлехи ларăвĕнче çивĕч калаçу пулчĕ.

Михаил Игнатьев çапла палăртрĕ:

– Сĕтĕн тивĕçлĕ хакĕ пулмалла тесе унччен те пĕрре мар калаçнă. Лавккасенче сутакан сĕтре ăна туса илекенĕн тӳпи 40-45 процентран кая мар пулмалла. Çавăн чухне тин ĕне кĕтĕвне сыхласа хăварăпăр. Мĕн куратпăр-ха? Хаксен танмарлăхĕнче хресчен нумай енĕпе выляса ярать. Темиçе çул каялла сĕт пухакансенчен хăшĕ-пĕри кивĕ, тутăхнă «Жигулипе» халтăртаттарса çӳретчĕ, халь вĕр çĕнни çине куçса ларнă. Вĕсем ĕне тытакан çинчен шухăшлаççĕ-и? Çук, ахăртнех. Услам туса пултăр. Кĕтӳ йышĕ чаксан вĕсем хăйсем те ĕççĕр юлĕç.

Чĕр тавар пухакансем хăйсене мăн кăмăллă тытни, ял çыннине ним вырăнне те хуманни çинчен эпир пĕрре мар çырнă. Рынок ирĕклĕхĕ тесе тем тума та юрать имĕш. Паян хресченĕн суйласа илмелли çук. Калăпăр, Етĕрне районĕнче сĕт пухакан пилĕк фирма ялсене пайласа тухнă та хаксем пирки те маларах калаçса татăлаççĕ пулас. Ютти кунта пырса кĕреймест.

Рынок тупăшăвĕ пулсан уйрăм çын хăйĕн продукцине лайăххах хак паракана сĕнĕччĕ. Тепĕр çăлăнăç – сĕт хуçисем пĕрлешсе кооператив туса хуни, сĕт завочĕпе тӳрреммĕн ĕçлени. Анчах вĕсен техника туянма укçа çук...

Республикăри сĕт завочĕсенче талăкра тата 400 тонна чĕр тавар тирпейлемелли хăватсем пуррине асăнчĕç ларура. Апла пулсан килти хушма хуçалăха аталантармалли хушма майсем палăртса хатĕрлемелле.

**Григорий СЛАВИН.**





**– Çул çине тухатпăр – пиçиххине çаклатăр!**

– Пристегнитесь – выезжаем на дорогу!

**В. Игнатьев ӳкерчĕкĕ**

**Микулай ИШИМБАЙ**

# ĂС ПАМА ВĔРЕНМЕЛЛЕ

Эх, тĕлĕнмелле пурнăç кайрĕ хальхи саманара! Пурте калама çук тăнлă, пурте ăс пама юратаççĕ. Пĕр вăхăтра эпĕ хама тăмран йăваласа тунă тесех шутлама пуçланăччĕ. Мĕншĕн-и? Калама пултаратăп: кам кăна ăс паман-ши, кам кăна усал сăмахпа хăртман-ши мана!

Пĕррехинче, кантурта техничкăра ĕçлекен Мавра аппа коридорта чарса тăратрĕ:

– Васли Иванч, – терĕ вăл пĕççине шарт! çапса. – Эсĕ чисти улатакка иккен!

– Ма апла калан-ха, Мавра аппа? – тĕлĕнтĕм эпĕ.

– Вĕреннĕ çын вĕт-ха эсĕ, Васли Иванч. Культура тени хăвăн пач та çук. Ав, хăвна тĕкĕр умне пырса пăх-ха. Пушмакусем – хăмăр, шăлавару – хура, пиншаку – ула, кĕпÿ – сарă. Галстуку вара чисти кăркка киккирикĕ! Хĕрлĕ тĕсе кам юратать тетчĕç-ха? – сăмахĕсене сăтăрттарчĕ хĕрарăм.

– Утмăла çитсе пыракана кун пек тăхăнсан та пырать пуль? Авланмалли каччă мар вĕт, – текелерĕм ăна аптăранă енне.

– Э-эй, санпа, шăтăк пуçпа, калаçса вĕçне-хĕрне тухас çук, – мăкăртатрĕ те Мавра хăй ĕçĕпе таплаттарчĕ.

Ĕç пÿлĕмне кĕрсен, ятарласах тĕкĕр умĕнче çаврăнкаласа пăхрăм. Тен, тĕрĕсех калать Мавра аппа? Хура пуставран çĕлетнĕ костюм пур-ха манăн. Уявсенче е хăнана-мĕне кайнă вăхăтра тăхăнаканни. Хура пушмакпа галстук та пур, шурă кĕпе те... Тепĕр кунхине çак çи-пуçпа ĕçе çитрĕм. Ларатăп хамăн ĕçпе тăрмашса. Пĕрле ĕçлекенсенчен хăшĕ те пулин эп çĕнĕ костюмпа килнине асăрхамĕ-ши тесе кăн-кан пăхкалатăп.

Çук, никам та пăхмасть ман çине. Кăнтăрлахи апат хыççăн кăна тĕп бухгалтер Иван Петрович хăй патне чĕнтерчĕ.

– Эсĕ, ват кăркка, хăçан çын евĕрлĕ ĕçлеме шутлатăн? – патлаттарчĕ вăл эп кĕнĕ-кĕмен.

– Ĕççĕр лармастăп-ха, – тавăртăм ăна.

– Ха, ĕç-пуçусем чиперех апла санăн? Çу-ук, тăванăм. Чăн-чăн лутăр эсĕ! Ĕçлекен çын сан пек яка тăхăнса çÿремест! Çамку çине картсах хур: квартал отчетне ик кун хушшинчех хатĕрлесе, çак сĕтел çине килсе хур. Ăнлантăн-и? Унсăрăн...

«Унсăрăн» сăмах мĕне пĕлтернине ăнланатăп– ха. Çав сăмах хыççăн «тăна кĕмесен» ĕçрен кăларса яма та пултарать пуçлăх. Вăтăр çул хушши кантурта шут ĕçĕпе аппаланса ларнине те шута илмĕ.

Тĕрĕссипе каласан, Иван Петрович хăй те шут ĕçне пит чухласах каймасть. Хушăран-хушă манăн ĕç пÿлĕмне кĕрсе шут кĕнекине уçкаласа пăхать те, пĕр-пĕр çĕре пÿрнипе тăк! пусса:

– Ку тата мĕне пĕлтерекен япала? Ну-кă, çĕнĕрен шутла. Çур сехетрен пырса пĕлтер, – тесе тухса каять.

Эх, тытăнатăп вара вĕтеленме! Ĕç пĕтерсен пăхатăп: ниçта та йăнăш тавраш çук, пурте малтан шутланă пекех. Кун çинчен пуçлăха пĕлтерме васкатăп.

– То-тă, тимлĕрех пулмалла, – аллисене кăмăллăн сăтăркалать Иван Петрович. – Юрать-ха, хам вăхăтра тĕрĕслесе, ăс парса тăратăп. Атту...

Ĕç хыççăн киле таврăнтăм кăна – карчăк та ăс пама тытăнчĕ.

– Эсĕ, – терĕ, – ват ухмах, кам умĕнче çĕнĕ çи-пуçпа курнăçланса çÿретĕн? Мĕнле майра тупса ятăн?

Мĕн тумалла? Тепĕр кунхине кивĕ çи-пуçпах ĕçе кайрăм. Мавра аппа курчĕ те пач калаçмарĕ. Сывлăх сунас вырăнне пуçне каçăртса, витрипе шăпăрне мăн кăмăллăн сулкаласа иртсе кайрĕ.

– Э-эй, мĕн каласси пур! Ăс паракансем ман пурнăçра хамăн пуçăмри шурă çÿç пĕрчисем чухлех пулчĕç ĕнтĕ. Вĕсене итлесе тем те туса пăхнă эпĕ. Анчах апла та, капла та ĕç тухни курăнмарĕ.

Пĕррехинче урамра пĕр пĕлĕш тĕл пулчĕ. Сăмах май хама «ăс панин» терт-нушисем çинчен каласа патăм çакна.

– Эсĕ хăв никама та ăс парса курман-и халиччен? – ыйтрĕ хайхискер манран.

– Çук, – терĕм эпĕ. – Ăсăм-пуçăм хама пурăнмалăх çитсен те аванччĕ.

– Çын панă ăспа пурăнсан, нихçан та малалла каяймастăн. Сăну-питÿ тăнлă çыннăнниех те-ха санăн... Пĕрле ĕçлекенсене, тус-юлташусене хăвăн ăс пама вĕренмелле, тăванăм. Çавăн хыççăн тин пурте хисеплесе пуç тайма пуçлаççĕ, – пĕтĕмлетÿ турĕ çакскер.

Çак калаçу хыççăн эпĕ те «ăслăланма» шутларăм. Тепĕр кун ĕçе çитнĕ-çитмен тирпей-илем еплереххине пăхса çаврăнтăм, Мавра аппана «ăс пама» пуçларăм:

– Мавра аппа, çиелтен пăхсан ăслă çын пекех курăнатăн-ха эсĕ, анчах кил-çуртри тусан сывлăхшăн пит сиенлĕ пулнине пĕлместĕн. Тусан пуснă çĕрте тем тĕрлĕ микробсем те ĕрчеççĕ. Юрамасть капла, юрамасть.

– Ĕнер кăна веçех çуса тухнăччĕ-çке.

Çав самантра пÿлĕм кĕтесĕнче кача пÿрне пысăкăш кушак каяшĕ выртнине асăрхарăм. Кушакки, Муркка ятлăскер, кантуртах пурăнать-ха. Мĕтри мучи хуралçă пăхкаласа тăрать ăна. Нумай шутласа тăмарăм, хайхи «парнене» хаçат çине хутăм та Мавра аппан сăмси патнех илсе пытăм:

– Сан шутупа, ку мĕн? Ылтăн катăкĕ-и?

Çапла майпа самантрах вырăнне лартрăм çакна. Тепĕр кунне Авчи Петровича тĕл пултăм. Ăна та ăс патăм:

– Эсĕ, Авчи Петровчă, – терĕм ăна, – механикре ĕçлетĕн çапах та. Çын умне саплăклă шăлаварпа курăнма намăс пулмалла.

Кĕске вăхăтрах кантурта ĕçлекенсене пурне те ăс парса пĕтертĕм. Пĕрисем мана курнă-курман хăйсен ĕç пÿлĕмĕсене тарса пытанаççĕ, теприсем пуç тайсах сывлăх сунаççĕ. Шереметсене ăс пани аванах усса пычĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Иван Петрович хăй пÿлĕмне чĕнсе кĕртрĕ.

– Вăт, Васли Иванчă, – терĕ вăл савăнăçлăн, – Тинех ăслă-тăнлă çын пулса тăтăн. Халĕ, акă, хăв та ыттисене ăс памалăх ÿсрĕн. Ĕçне те йĕркеллĕ туса пыра пуçларăн...

Юлашкинчен, хисеплĕ юлташсем, сире те çакăн пек ăс парасшăн эпĕ:

– Хăвăра хисеплеччĕр, нумай пĕлекен çын тесе шутлаччăр тесен, ыттисен çитменлĕхĕсене тупса палăртса ăс пама вĕренмелле сирĕн. Хăвăр чăнласах та ăслă пулни пит кирлех те мар кунта. Çапла, тусăмсем.

Любовь МАРТЬЯНОВА

## Çук ĕне сĕтне ырлакан та çук...

Çук ĕне сĕтне ырлакан та çук,
Çук саттин кĕпе хуралас та çук.

Çук çавра çиле шурлăх çăтрĕ пуль,
Çук савни ўтне сăнă лекрĕ пуль.

Çук ыйту çине хуравлас та çук,
Çук юмах çинчен юмахлас та çук.

Сăвар ЭРТИВАН

## Асăрхаттаракан пĕлтерўсем

*Кивçенçĕ хапхи çинче:*
Панă чух –
Сăнчăрти хам-хам.
Илнĕ чух –
Йăпăлти вăтанчăк.
Вăт, анчăк!

*Пуçлăх хапхи çинче:*
Юрас тесен
Ыр сун асла,
Вăл ўсĕрсен
Эс сунасла!

*Вăрçакан çын хапхи çинче:*
Асăрхан, пĕтерет!
Ку çын пĕтĕрет,
Малтан эрех,
кайран хăлха!

## Лидер




Херлуф Бидструп ўкерчĕкĕ

Петĕр ЯЛГИР

## Каларăшсем

«Ыр ут çынна таптамасть,
Ыр çын çынна хурламасть», –
Тенине пĕлет Хумма,
Пурпĕр хурлать такама.

Çын валли шăтăк ан чав.
Лекĕн теççĕ ху унта.
Çакна пĕлнипех Питрав
Çĕр айне чикет Тита.

Ик мулкача йĕрлекен
Пĕрне те тытайман тет.
Çакна шеп пĕлсех Евген
Пур ĕçе те кўлĕнет.

– Ан мухта хăвна, – тет ял, –
Мухтаччăр çынсем сана.
Пурпĕрех çўрет Миххал
Мухтаса хăйне кăна.

Каймăн ултавпа инçе
Тенине пĕлсе тăрсах
Улталать тек Униççе,
Уямасть те намăса.

Васкакан вакка сикет
Тенине илтмен-ши Влас.
Пĕрмаях чупса çўрет,
Такăнса ўкет час-час.

«Пĕччен йывăç час ўкет».
Нил çакна шута илмест.
Пĕччен ялан çўрет,
Тус тупмашкăн сĕмленмест.

# Ту качакин мыскарисем



Хальхи пурнӑҫра темӗнпе те тӗл пулма тивет ҫав. Ахальтен мар «пурнӑҫ хӳри пӑрӑнӑҫ» тенӗ халӑхра...

Хамӑр кантурта штат чакарнине пула ӗҫсӗр тӑрса юлсан кӑштах кантӑм та, ара, сывлӑш ҫавӑрса илмелле-ҫке, унтан «сунара» тухрӑм. Ӑраскал мана тир пухакан кантура илсе ҫитерчӗ.

– Ирт, лар, – ӑшшӑн кӗтсе илчӗҫ мана. Эпӗ ӑҫта тата хӑҫан ҫуралнине, малтан ӑҫта ӗҫлесе пурӑннине йӑлт тӗпчесе пӗлчӗҫ.

– Апла Ту качаки эсӗ, – терӗҫ мана. – Хӗвел тухӑҫ гороскопне ӗненес тӗк, санӑн чӑтӑмлӑх сахалрах. Кунсӑр пуҫне хӑвна ытла пысӑка хуратӑн. Ку вара ӗҫре ура хурса кӑна пырать. Ту качаки ытларах тӗксӗм тӗссене юрататъ. Каламасӑрах паллӑ – тӗксӗм япала салхулӑха тата кичемлӗхе пӗлтерет вӗт. Хальхи вӑхӑтра пурнӑҫ ахаль те кичем, эсӗ вара... Тир пухаканӑн хаваслӑ пулмалла. Кунсӑр пуҫне Ту качаки шанчӑксӑр тата...

Эпӗ веҫех ӑнлантӑм. Кунта манӑн ӗҫ ӑнмарӗ иккен, ирӗксӗрех урӑх ҫӗре кайса пӑхма тивет. Ҫывӑх юлташсем хистесех чӗннипе эпӗ страхлакан агент ӗҫне пуҫӑнма шут тытрӑм.

– Арҫын агентсем пире шутсӑр кирлӗ, – ӑшӑ кӑмӑлпа кӗтсе илчӗ мана хӗрарӑм пуҫлӑх. – Хӑвӑн ҫинчен тӗплӗнрех каласа пар-ха.

Эпӗ пӗр пытармасӑр, юптармасӑр хамӑн ачалӑха, аслӑ шкулта вӗреннӗ ҫулсене, юлашки тапхӑрта мӗн-мӗн тунине сӑнласа патӑм. Хӗрарӑм мана пысӑк куҫлӑхне хывсах, ним пӳлмесӗр итлесе ларчӗ.

– Пуҫлӑхпа сирӗн мӗнле хутшӑнусем пулнӑ? Вӑл хушнӑ вӑрттӑн пӗр-пӗр ӗҫе пурнӑҫласа курнӑ-и эсӗ? – терӗ вӑл юлашкинчен. Эпӗ, хам айван пулнипе ӗнтӗ, нимӗн те ӑнланаймарӑм-ха. Ҫакна пуҫлӑх сисрӗ пулас.

– Калӑпӑр, сире пӗр-пӗр агент ҫинчен тӗплӗн пӗлме хушнӑ, – тӑнлантарчӗ вӑл. – Ҫакна вӑрттӑн, никам сисиччен тумалла. Мӗн ыйтса пӗлни ҫинчен кайран пуҫлӑха каласа памалла. Тулькиш ҫакна никам та ан систӗр. Ку чухне агент пулса ӗҫлеме пӗлни питӗ сахал вӗт.

Эпӗ никама та нихҫан та сутса курманни, пӗрле ӗҫлекен ҫын ҫинчен элек сарма юратманни ҫинчен пӗлтертӗм. Тата, иҫмасса, ку ыйту маншӑн пачах кӗтмен ҫӗртен пулчӗ. Ҫавӑнпа та страхагент пулма килӗшмерӗм. Ара, пӗр-пӗрне йӗрленӗ, ҫынна шанман чухне мӗнле ӗҫ пултӑр-ха вӑл?

Аптранӑ енне ирӗксӗрех Хӗвелтухӑҫ гороскопне тӗпчеме тытӑнтӑм. Чӑн та, унта тӗрӗсси те ҫук мар-мӗн! Сӑмахран, Ту качаки чапшӑн, ят-сумшӑн ҫунакан ҫын мар иккен. Вӑл сӑпайлӑ, ӗҫре перекетлӗ тата пӗр вырӑнта пусӑрӑнса ларса ӗҫлеме пултарать. Ту качакисем ытларах ҫулйӗр ҫинче ӗҫлеме, кӗтӳ кӗтме, ҫӑл чавма, фермер е юрист пулма, сехет юсама юратаҫҫӗ.

Шухӑшланӑ – тунӑ. Пӗр хаҫатра темле кантура юрист кирлӗ тенине вуласа пӗлтӗм те тӳрех унта ҫул тытрӑм.

– Эпӗ – Ту качаки, – терӗм алӑкран кӗнӗ-кӗменех. Перекетлӗ, шутсӑр ӑслӑ-тӑнлӑ ҫын. Ҫынна шансах каймастӑп, ун вырӑнне документпа ӗҫлеме юрататӑп. Юристра ӗҫлеме ҫакнашкал ҫын кирлӗ сире. Ӗненместӗр тӗк хӑвӑр вуласа пӗлӗр акӑ...

– Ку тӗрӗсех, – терӗ пуҫлӑх манпа килӗшсе. – Эсир хӑш ҫул ҫуралнӑ вара? А-а, эсир Упӑте камне пӗлетӗр-и-ха?

Кӗскен каласан, манӑн кунта та ӗҫ ӑнмарӗ. Упӑте ҫулӗнче ҫуралнисем ҫынсенчен мӑшкӑллама, вӗсенчен пӗрмай витлеме юратаҫҫӗ. Кӗскен каласан, Упӑте – шульӑк этем. Вӑл чи хӑватлӑ, чи чӑтӑмлӑ, чи ӑслӑ Аҫтахана та улталама пултарать иккен. Ҫитменнине, чее Упӑте чапшӑн шутсӑр ҫунса пурӑнаканскер иккен.

Ҫак кантур пуҫлӑхӗ хӑй Аҫтаха ҫулӗнче ҫуралнӑ-мӗн. Эпӗ ҫакна пӗлмен те.

Акӑ мӗншӗн килӗшмен эпӗ ӑна.

**Г.ХАЙХИ**



## Педканашра

Педагогсем вĕрентӳ ĕç-хĕлне сӳтсе яваççĕ.

– Унчченхи çулсенчипе танлаштарсан шкул ачисен кăтартăвĕсем чылай лайăхланнă. Уйрăмах – çĕр метрлă дистанцие чупассипе. Уншăн пирĕн физрука тав тумалла, – пĕлтерет шкул директорĕ.

– Çук, мана мар – Патшалăх Думине, – сăпайлăн хуравлать вĕрентекен. – Вĕрентӳ учрежденийĕсенчен 100 метрти е унран та çывăхри киосксенче пирус сутма чарнă хыççăн çак кăтарту ӳсме пуçларĕ.

## Ирĕксĕр макияж

Ачасем шкул умĕнче кĕпĕрленсе тăраççĕ.

– Пăхăр-ха, пăхăр, Якку хĕр ача пекех тута хĕретнĕ. Макияж тунă пуль, – тет пĕри.

– Çук, музыка учителĕ япăх юрланăшăн ăна тутаран хĕрлĕ кăранташпа тĕкрĕ.

## Илемлĕ пурнăç сачĕ

– Тĕлĕнмелле! Мĕншĕн сирĕн шкулта хĕрарăмсем кăна ĕçлеççĕ?

– Пирĕн шкул ахаль-махаль шкул мар – культура пурнăçĕн хӳхĕм сачĕ. Этемлĕхĕн чечен çурри шăпах çак тĕллевпе – илемлĕ пурнăçшăн! – вăй хурса ĕçлет. Арçынсене ку нуша нихăш енчен те пырса тивмест.

## Урокра

Вĕрентекен:

– Шкул çуртне юсама укçа хывнисене пурне те «пиллĕк» паллă лартатăп. Ыттисем урок калама хатĕрленĕр.

## Айăпланă

– Вова, санăн дневникӳ ăçта? – ыйтать ашшĕ.

– Эпĕ ăна «япăх» паллăсемшĕн тĕттĕм кĕтесе хупрăм.

## Малашне аслă шкула вĕренме кĕресси çăмăлланать

Ашшĕ-амăшĕн пухăвĕ пырать.

– Тепĕр вунă çултан аслă вĕренӳ шкулĕсене кĕме вунă хут çăмăлрах пулать, – пĕлтерет шкул директорĕ.

– Мĕншĕн?

– Мĕншĕн тесен эпир кăçал 10 ачана шкул вĕренсе пĕтернине ĕнентерекен аттестат патăмăр. Пĕрремĕш класа вара пĕр ачана çеç йышăнтăмăр.

## Уйрăм сӳрекенсем

– Пирĕн класра икĕ ача ыттисенчен уйрăм çӳреççĕ, – амăшне пĕлтерет Петюк шкултан килнĕкилменех.

– Камсем?

– Ашкăнчăк Ивановпа отличник Сидоров.

– Мĕншĕн уйрăлаççĕ вара вĕсем?

– Ашкăнчăкĕ ашшĕ-амăшĕ хĕнесрен тарса çӳрет, отличникĕ – тантăшĕсем «тӳн-тӳнле» вылясран.



## Киле ĕç памасан

– Киле ĕç пачĕç-и? – ыйтать амăшĕ ывăлĕнчен.

– Çук.

– Питĕ аван, халех тĕпеле чашăк-тирĕк çума кай.



Николай ИШЕНТЕЙ

# Раççейре кама

## е Çичӗ юлташ ниçталлисӗр

**Памфлет**

Вырăс халăхӗн аслă поэчӗ Николай Некрасов «Кама Руç çӗрӗнче пурăнма аван» поэминче калани шкул сакки çинче ларнăранпа паян кунччене хăлхара янăрать:

Шутла та туп хăш çултине ,  
Шыра та туп хăш çӗртине,  
Мăн çул çинче пуçтарăнчӗç  
Çич ял çынни пӗрле:  
Самантлăх «ирӗк» илнисем,  
Туртсахӗсев кӗпӗрнинчен,  
Хуйăхтӳсев уесӗнчен,  
Пушлахăвăл вулăсӗнчен,  
Тем тӗрлӗ ялсенчен –  
Саплăккасси, Шăтăккасси,  
Çара Тяппа, Хирти Шăнкас,  
Çунăк Çырма, Выçвартавраш,  
Тырпулманьел те пур.  
Пуçтарăнчӗç те тытăнчӗç  
Хӗрӳллӗн тавлашма вӗсем:  
Руç çӗрӗнче кам пурнăçӗ  
Хавасля та тулли?

Çак йӗркесене вуланăçемӗн куç умне ӳкерчӗк тухса тăрать. Аслă çулпа çичӗ çын – çула май хурăнташсем – лăпăс-лăпăс утаççӗ. Ниçталлисӗр таçталла çиччӗн пӗрле утаççӗ. Кам пӗлет ăçта кайнине? Кайсан-кайсан хайхисем çул юппинче чарăнчӗç.

Ку ӗç-пуç тахçан-авалах пулса иртнӗ-ха, анчах унашкалли нумай çул иртсен те, тӗслӗхрен, иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш çулӗсенче, часчасах тӗл пулкалатчӗ. Уйрăмах Мускав çулӗ çинче ӗç шырама çӳрекенсем йышлăн кӗшӗлтететчӗç. Аслă классикăмăрăн сăнарлă йӗркисем ӗмӗрсем иртсен те кивелмеççӗ пулас, тӳрремӗнех ку чухнехи пурнăça ӳкерчӗклеççӗ.

Пулать вӗт тӗлӗнтермӗш! Пӗррехинче, юмахра мар, хальхи сумлă саманарах, сапаланчăк çав ялсенчи арсем тепӗр хут пӗрле пуçтарăнса çула тухнă тет. Чăн сăмах-ши ку, суя-ши – пӗлместӗп. Анчах, чӗлхе вӗçне килни пӳрт умнех килет тенешкел – пăхмасăр калама вӗреннӗ йӗркесем сисмесӗрех тепӗр майлăн çаврăнса тухрӗç:

Ку пулнă хамăр тăрăхрах,  
Мухтавлă, сумлă çӗр-шыврах,  
Мăн çул çинче пуçтарăнчӗç  
Çич ял çынни пӗрле:  
Тӗнче касса çӳрекенсем,  
Тăван çӗртен сивӗннисем,  
Муритленӳ хутлăхӗнчен,  
Чарусăрлăх кантурӗнчен,  
Тем тӗрлӗ ялсенчен –  
Стаканкасси, Хурхух пусси,  
Мухмăрлапуç, Камрансыпас,  
Саклатпарас, Шапашкаяс,  
Тыракманьел те пур.  
Пуçтарăнчӗç те тытăнчӗç  
Хӗрӳллӗн тавлашма вӗсем:  
Руç çӗрӗнчи хăш хутлăхра  
Аван-ши шапашра?!

Ай! Мӗн турăм-ха эпӗ? Шӳтлепутле сăмаха пула Николай Алексеевичăн вилӗмсӗр йӗркесене арпаштартăм-иç! Пурнăç арăш-пирӗшлӗхӗ, ял-хулара çынсем ӗçкӗпе алхасни куç умӗнчен кайманран çапла каласа хутăм. Уншăн «хуртлă чӗлхе» тесе намăса ан кӗртӗрех. Хисеплӗ вулаканăм, алла ирӗке янăшăн каçару ыйтатăп. Малашне картран тухмăп, малаллахи калаçăва проза чӗлхипех тăсас тетӗп. Капла шанчăклăрах.

Хам курни-илтнине йӗркипе каласа парам-ха эппин. Саплăккасси çынни Сапăр Санькка, тăван ялӗнче трактористра ӗçлесе хисеплӗ ят илнӗ колхозник, пӗрлешӳллӗ хуçалăх арканнă хыççăн хăй ялта никама та тăрăха «Пучах» колхоз тетчӗç. Халӗ Хурхух пусси тесен юрăхлă, – хуравланă Хура Хӗлип. – Авăрлă кулач хыптармаллаччӗ те чип-чипер хуçалăха аркатакансене.

– Хă, эпир иксӗмӗр те пӗрешкел шăпаллă иккен. Пирӗн яла хут çинче Саплăккасси теççӗ, анчах йӗплӗ чӗлхесем стаканкассисем тесе тăрăхлаççӗ пирӗнтен. Ялта ӗçкӗç йышлăран. Паян та аран хăпса тухрăм тулли стакан хушшинчен. Тупăшлă ӗç пур тенине илтрӗм те.

– Ăçта?

– Мускавра, шапашра!

– Ил мана пӗрле...

– Мӗн ырри пур санăн?

– Пуртăпа пăчкă!

– Атя эппин, пул юлташ, çула майăн хурăнташ!

Малалла Санькапа Хӗлип иккӗшӗ пӗрле утнă. Кайсан-кайсан вӗсене Çара Тяппа çынни Лаххан Тяпанӗ тӗл пулнă. Ăна та нуша килтен хăваланă: çӗнӗ ӗç пуçарас тӗллевпе пысăк кредит илнӗ те парса татайман. Пирӗшти пек çылăхсăрскер кӗтмен-туман сӗртенех саккун умӗнче айăпа кӗнӗ. Тупăшлăрах ӗçе кӗрӗшсе çав парăма саплаштарасшăн.

– Ăçта каятăр? – ыйтнă Тяпан.

кирлӗ маррине туйса илнӗ. Хисепсӗре тухнăскер саплăклă курткине тăхăнса, кутамкка çакса Мускава ӗç шырама тухса кайнă. Кайсан-кайсан вăл пӗр çынна тӗл пулнă.

– Ăçтисем эсӗ? – ыйтнă Санькка.

– Шăтăккассисем эпӗ. Ӗлӗк пирӗн

– Мускава, шапаша.

– Илĕр мана та хăвăрпа пĕрле.

– Мĕн ырри пур санăн.

– Болгарка пур, мăлатук та çумрах!

– Атя эппин, пул юлташ, çула майăн хурăнташ!

нă. Пăхаççĕ çўревçĕсем – шывĕ пăхма шыв пекех, çыранĕсем те иккĕ. Кашни енчех халăх йышлă пурăнать. Анчах çак шывăн пĕр çыранĕнче пурăнакансем кăмăллă та тату пурăнаççĕ, пĕр-пĕрне кўрентермеççĕ. Çĕр çинче те, шывра та, сывлăшра та – пур çĕрте те ĕç вĕрет.

– Тен, картографсемпе ытти тĕпчевçĕсем йăнăшнă, çавна пула ырă-усал чикки карттă çине ўкерĕнмесĕр юлнă пулинех. Чăн пурнăçра вара кунашкалли туллиех.

– Ыйтса пĕлер хăйсенчен, – пĕр ăс тытнă юлашкинчен.

Пынă тет çўревçĕсем тăнăç пурнăçпа пурăнакансем патне. Патша керменне кĕнĕ те çапла ыйтнă:

– Ырă Тăван, эсĕ тытса тăракан çĕр-шыв çав тери пысăк та пуян. Унта йышлă халăх пурăнать. Çынсем пĕр-пĕрне кўрентернине, харкашнине курмарăмăр. Кала-ха, хисеплĕ патша, епле майпа çак тăнăçлăха тытса тăма мехел çитеретĕн?

– Хаклă хăнасем! Кунта нимӗнле вăрттăнлăх та çук. Ытах çынсем харкашма пуçласан эпĕ вĕсене ырă сунатăп, халăх кăмăлне килекен хушусем паратăп. Хамăн кăмăл хуçăк чухне çынсем мана ырă сунаççĕ, пур енлĕн пулăшаççĕ. Ырă тунăшăн никама та шалу тўлеместĕп. Вăл хăех каялла çаврăнса килет.

Çакна илтсен çўревçĕсем хăйсем ăнланнă пек пĕтĕмлетў тунă: «Çĕр-шыври лару-тăру патшаран çеç килмест. Влаçпа халăх пĕрне-пĕри ырă сунсан тăнăçлăх хуçаланать ялан».

Унтан çичĕ пĕлĕш тепĕр çыранта пурăнакансемпе курнăçма шутланă. Шухăшланă çеç – Аслă Шыв урлă асамат кĕперĕ карăннă. Тĕрлĕ тĕспе тĕрленĕскер, ярăмăн-ярăмăн чĕнтĕрленĕскер. Çўревçĕсем çав кĕпер урлă каçнă та хаярлăх çĕршывне кĕнĕ. Кунта Шуйттан патшара ларнă. Усалук ятлăскер.

– Усалук патша, эсĕ тытса тăракан çĕр-шыв çав тери пысăк та хаяр. Кунта йышлă халăх пурăнать, пусмăрлăх хуçаланать. Çынсем ăсхакăл вăйне шанмаççĕ, хĕç-пăшал вăйне ĕненеççĕ. Кала-ха, епле майпа çак усал патшалăха тытса тăма мехел çитеретĕн? – тесе ыйтнă. – Кунта патшара ларма мар, чуна усрама та йывăр. Каплах пурăнсан ахăр самана килесси те часах.

*(Вĕçĕ 10-мĕш стр.)*

# пурăнма аван

## таçталла çул çўрени çинчен



Шапаш команди малалла утнă. Кайсан-кайсан çак ушкăна Хирти Шăнкас, Çунăк Çырма, Выçвартавраш çыннисем пырса ернĕ. Кашниннех килтен тухса кайма сăлтав пулнă. Пĕри арăмĕпе килĕштереймен, тепри – хунямăшĕпе, виççĕмĕшне ĕç укçи тивĕçтермен, пуçлăхпа пĕр чĕлхе тупайман. Юлашкинчен çак ушкăна Тырпулманьел çынни Хĕсĕр уйри Хĕлимун пырса ернĕ. Хăй ĕçлекен пахча-çарана «хĕсĕр уй» тесе каланăран çынçăннă-мĕн çак ят ун çумне. Çапла вара пĕр çулпа утнă теççĕ çич юлташ – çула майăн хурăнташ.

Кайсан-кайсан шапаш команди Аслă юхан шыв хĕррине пырса тухнă.

Пурнăç чечекленет.

Тепĕр енче вара пачах урăхла – çынсем арăш-пирĕш алхасаççĕ, пĕр-пĕринпе вăрçаççĕ, тўпелешеççĕ. Çĕр тăрăх çўрекен тимĕр утсене вут тĕртсе çунтараççĕ, тўпере вĕçекен тимĕр кайăксене пере-пере антараççĕ. Йĕркесĕрлĕх хуçаланать.

Ютран килнисем кунта мĕн пулса иртнине тўрех ăнкарса илеймен-ха. Ункун çўресен çакна асăрханă: Аслă шывăн пĕр енче Ырă Тăван хуçаланать, тепĕр енче – Усал Шуйттан.

– Тĕлĕнмелле! Пĕр патшалăхра икĕ патша – Ырăпа Усал.. Кунашкалли халĕччен те пулман, – тенĕ Сапăр Санькка.

– Кура-тăра çўресе тем те куртăм темелле, анчах кун пеккине тĕлĕкре те курман, – хушса хунă Хĕлип. – Пĕрисем ĕçленĕ чухне теприсен мĕншĕн хурахланмалла? Пурнăç кĕрешў иккен – мирлĕ пурăнас тесен çапăçава хатĕрлен!

– Тĕрĕс мар çĕр-шыв ку! Тĕнче карттинче ырă-усал патшалăх çук, – хăй шухăшне пĕлтернĕ Тяпан.

– Куç ултавĕ пуль! Е тĕлĕк! – хирĕçленĕ Хĕлимун. Иккĕленекенсем те тупăннă:

# Раççейре кама пурăнма аван...

*(Вĕçĕ. Пуçл. 8-9-мĕш стр.)*

– Ютран килнисем! Кунта нимĕн хăрамалли те çук. Эпĕ çынсене усал тунăшăн укçа тӳлетĕп. Чунĕсене сутнисем çур сăмахранах мана ăнланаççĕ. Мана пăхăнаççĕ. Эпĕ мĕн хушнине ним хирĕçлемесĕр, самантрах пурнăçлаççĕ. Пусахлу – пурнăç йĕрки. Халăх сехĕрленсе пурăнсан çĕр-шыва тытса тăма та аван.

Çичĕ юлташ, çула майăн хурăнташ, пуç хыçаççĕ, шухăшлаççĕ. Пурнăçа саплаштармалли майсем шыраççĕ. Ку патшалăхра ĕçе вырнаçас – хăранипе пĕтĕм ӳт-пӳ сӳлетет. Патшапа килĕшӳ тăвас – чуна сутма тивет. Ырăлăх çĕр-шывне каялла таврăнас – çул хупăннă, тĕрĕллĕ-чĕнтĕрлĕ кĕпер куçран çухалнă. Мĕн тумалла? Çичĕ юлташ пĕр шухăшлăн шуйттана сутăнма килĕшмен, çавăнпа та усал-тĕсел çак çĕр-шывран пуçран чулпа çапнă пек тухса вирхĕннĕ. Кайсан-кайсан, пăлханни иртсен, çул юппинче чарăннă. Хивре ыйтăва йышпа сӳтсе явнă.

«Шуйттан патшалăхĕнче кам хуçа?» – ыйту лартнă пĕри. «Укçа!» – хурав панă пурте харăссăн. «Патшапа çывăх çыннисем пĕр-пĕрин чысне укçалла сутсан ыттисем валли мĕн юлать?» – чуна тăрăннă йĕплĕ ыйту. «Нимĕн те!» – янранă хăлхара. Мĕн илтнине ăша илсессĕн хамăн та çапла ыйтас килет: «Ку патшалăха укçа миххи тытса тăрать-ши?»

---

Хисеплĕ вулаканăм, çӳревçĕсенчен самантлăха уйрăлса хамăр пирки шухăшлар-ха. Ара,шăпах çак ыйтусем пире те, чăн пурнăçра пурăнакансене, шухăшлаттараççĕ-çке. Хамăр пурăнакан тăрăхра та Ырăпа Усал пайтах, вĕсене çителĕклĕ таран шайлаштарма пулать-и?..

Сăмахпа вăлтса калани пуçран çапни мар – кӳренме сăлтав çук. Хуравне вара кашниех хăй ăнланнă пек пама пултарать. Чăнах та, пурнăç юхăмĕ, пысăк шыв пек, Ырăпа Усал хушшипе юхать. Икĕ çырантан сăрхăнакан ырăлăхпа усаллăх пĕр юхăма пĕрлешнĕрен чылай чухне вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме те çук-тăр. Çак юхăмра пиллĕхпе хаярлăх пĕр чарăнми ылмашнăран мĕн пулса иртнине никам та тӳрех ăнкарса илеймĕ. Пирĕн пĕлĕш çӳревçĕсен те Ырăпа Усал патшалăхĕсенче пулса курнă хыççăн шухăш-туйăмĕ чылай улшăннă:

– Ман шутпа, ырăлăх çĕр-шывĕнче пурăнма аванрах, Тăван çĕр-шыври пекех унта, анчах ырри ытларах, – тенĕ Сапăр Санькка.

– Çук, чышкă-маклашкă кĕçĕтнĕ чухне Шуйттан патшалăхĕнче пурăнма хаваслăрах. Тăван çĕршыври пекех унта та, анчах пусахлу тата хаяртарах, – хирĕçленĕ Хура Хĕлип. – Çӳле çĕкленес тесен çапăçăва хатĕрлен!

– Хĕсĕрленине ырлакан влаçан ĕмĕрĕ кĕске, ăна хăйĕн шаннă çыннисемех ишсе антарĕç е тĕнчене аркатĕç, – асăрхаттарнă Лаххан Тяпанĕ. – Парăм мăйран пăвнă чухне тĕнче пĕтни аванрах.

– Мĕскер калатăн, Тяпан? – хирĕçленĕ ыттисем. – Мĕншĕн парăмшăнах тĕнчене ылханмалла?! Парăм тени пулсах пытăр. Парăм пĕтсен кун пĕтет.

– Çапли-çаплах пулĕ те-ха, анчах кам патне кĕрĕшсе пысăк парăма татмалла-ши парăмçăн? – хута кĕнĕ Хĕлимун.

– Мĕн шыранине тупрăмăр. Тĕнче хапи ывăç тупанĕ çинчи пекех курăнать: ăçта ан çит – ĕç çыннине пур çĕрте те ыр-усал кĕтет! Эппин пирĕн мĕншĕн ютлăхра сулланса çӳремелле-ха? – евитленĕ тахăшĕ.

Хивре ыйту чылайăшне шухăша янă:

– Çуралнă çĕр-шывра ĕçлесе пурăннине нимĕн те çитмест, – текен те тупăннă.

Нумай вăхăт иртнĕ-и, сахал-и, тĕнче каскăнĕсем тĕрлĕ ĕçре тар юхтарса, тĕрлĕ хуçа патĕнче муритленсе ал хыпанне ăшăтмалăх ĕç укçи илнĕ те таврăннă каялла. Пăхаççĕ – Чăваш Енре те пурнăç ырă еннелле улшăннă иккен: хирте – пучах юрри, фабрикăра ĕç кĕвви янăрать.

– Чăвашра та аш-пăш патши пур! – тĕлĕннĕ Сапăр Санькка.

– Пыл-çу хуçи те, – хушса хунă Хура Хĕлип.

– Чим-ха, манăн пĕлĕш-иç ку! Пирĕштинни пек чăтăмлăхпа капмар ĕçе ăнтарнăскерĕн шуйттанăнни пек вăй-хăват пулнă, ахăртнех! – пĕççе шарт çапнă Лаххан Тяпанĕ. Унтан ӳкĕнĕçлĕн çапла хушса хунă. – Эпĕ вара чăтăмлăх çитереймерĕм.

Нуша кама ăс вĕрентет, кама кулач çитерет. Ытти çӳревçĕсен те шухăшĕ тепĕр май улшăннă:

– Нисталлисĕр таçталла çул çӳрерĕмĕр пулмалла... Ырă пурнăçа хамăр тăрăхра хамăрах çĕклер. Чăтăмлăн пурăнар. Чăтăмлăх тĕнчене тытса тăрать, ырă сунăм пурнăçа, халăх йышне йĕркелесе пырать, – пĕр ăс тытнă çӳревçĕсем. Хĕсĕр уйри Хĕлимун та ыттисенчен юлман, капланнă шухăшне çапла çавăрса каланă:

– Эпĕ те сирĕнпе килĕшетĕп. Чăн сăмах, ырă ĕçе ăнтарма шуйттанла вăй хумалла! Çĕр хĕсĕр мар – тăрмашсан пулăхсăр çĕртенех иçĕм шерпечĕ сăрăхтарма пулать.

Аслă çулпа çичĕ пĕлĕш пĕр тĕллевлĕн утаççĕ. Аташмасăр çӳрĕрех, килĕрсене тĕрĕс-тĕкел çаврăнса çитĕрех. Сире кашнинех тăван тăрăхра тăван çĕр кĕтет. Хамăр тăрăшсан тăван ялхуламăр ячĕ-сумĕ те ӳсĕ. Сăнсăпачĕ те чиперленĕ. Пуянкасси, Мерченкасси, Шевле сарри, Чечек ташши, Чуп тунă хир, Пыл çунă ир, Сĕт-çу кӳлли те пулĕçха... Тем тесен те пурнăç пурăнас тесен ăсталăха алла илни çеç сахал. Чăтăмлăхпа перекет ĕçе-йыша тĕреклетет, пурнăçа та йĕркелет.

Лидия САРИНЕ

# Кукăль çиме кил!

– Алло! Килтех-и? Страсте!

– Килтех-ха.

– Мĕн ĕçлетĕн?

– Нимех те...

– Эп сана паян хам пата кукăль çиме чĕнесшĕн.

– Мана-и?

– Сана ĕнтĕ. Кама пултăр? Санран хаклă çын манăн урăх çук.

– А-а, юрать. Тахçанах вĕри кукăль çименччĕ.

– Вăт паян çиетĕн.

– Юрать, юрать. Мĕн-и, кукăлĕ пиçсе тухрĕ-и?

– Çук-ха. Эпĕ сана мĕн илсе килме хушасшăнччĕ...

– Мĕн?

– Çăнăх çук-ха манăн. Чуста хума çăнăх илсе килейместĕн-ччĕ-ши?

– Юрать. Урăх мĕн илсе пырас?

– Чуста çине яма пĕр-ик çăмарта илсен аванччĕ те...

– Юрать.

– Э, сухан кирлĕ тата. Кукăль çине яма.

– Юрать.

– Э, тăхта-ха, мансах кайнă! Çу пĕтсе çитнĕччĕ. Çу.

– Мĕнле çу?

– Тип çу.

– Юрать.

– Тăхта! Кукăльпе сыпса çиме тархун илсе кĕр-ха тата.

– Эп тархун тавраш ĕçместĕп. Унта хими...

– Апла пулсан минералккă. Эп сана укçине парап.

– Минералккă? Эрех ĕçмен чухне мĕн минералкки унта?

– Ара, хăнана килетĕн вĕт. Çур литр илсе кĕретĕн пуль-ха. Лавкки çула май вĕт.

– Юрĕ. Тата тем кирлĕ-и?

– Çук. Урăх ним те кирлĕ мар. Ну, ытахальтен ачасем валли пĕр торт илсе яр эппин. Çитрĕ те пире. Ытти хамăнах пур. Пире нумай кирлĕ-и? Ма чĕнместĕн? Эй! Ăçта сухалтăн эс? Алло! Алло теп! Таçта пĕтрĕ... Эх, кукăль çиесси пулмарĕ...





# АЙАВАН

Сергей Васильевич – сăмах ваклама юратман, йĕркене хисеплекен, аллăсенчен иртнĕ типшĕм çын. Алă панă чух вăл шăши юсăнни пек куçĕпе асăрханулăн пăхать, шĕвĕр сăмсине çăвара кĕртсе ярасла çывхартать. «Пурнатпăр, ай, аван»,– тет те йăпăр-йăпăр уттипе малалла иртсе каять. Кантурта ĕçлекенсем ăна, ялан çапла каланăран, Айаван тесе чĕнеççĕ.

Мана профсоюз комитетне суйланăччĕ. Çав сăлтавпа пурте саламлаççĕ хайхи. Сергей Васильевич та куктĕриллĕ çăмлă аллине тăсса пачĕ, «пурнатпăр, ай, аван», терĕ те пÿлĕмрен йăпшăнса тухса кайрĕ. Çакăн хыççăн вăл ман пата кунсерен кĕре пуçларĕ. Анчах пĕринче те хăй мĕншĕн кĕнине палăртмарĕ.

Пĕррехинче, ĕç пĕтес умĕн, пÿлĕме ватах мар, пит-куçне сăрланă, тути хĕррисене хĕретнĕ кăтра пуçлă хĕрарăм пырса кĕчĕ. Сывлăх сунчĕ те вăл, кĕске мăйне тăсса:

– Эсир, паллах, мана пĕлме тивĕç ĕнтĕ...– терĕ.

– Каçарăр та, ырă çыннăм,– пуçа пăркаларăм эпĕ,– астумастăп сире ăçта курнине.

Палламан хĕрарăм сĕтел умне пычĕ, куç айĕн пăхса, шĕвĕр пÿрнипе пысăк пĕлтерĕшлĕн юнаса илчĕ:

– Мана пĕлместĕр-и çак? Мана? Сергей Васильевич арăмне? – тĕлĕнчĕ вăл. – Хă, виçĕмçул эпир пасарта анчăк çури туяннă чух пире пуç сĕлтсе хăвартăр-çке? Нивушлĕ маннă? Эп пĕрре курнипех палласа юлтăм. Эсир профком председателĕ вĕт? Упăшка пирки эп. Турă пулăр, пулăшăр мана!

– Сергей Васильевича темĕн пулман пуль?– хыпăнса ÿкрĕм эпĕ.

– Çук, нимĕнех те пулман, – хуравларĕ хĕрарăм. – Ылтăн çын вăл ман Çерук. Вăрçма-ятлаçма мар, урлă сăмах чĕнеймест. Авлантарма та эп ăна хам авлантартăм. Вăтансах вилет. Çынран хăйăр пĕрчи ыйтса илеймест хăйшĕн. Эп ăна сывлăхне çирĕплетме санаторие кайма ÿкĕтлетĕп. Вăл пур, путевка ыйтма аван мар тет.

Сергей Васильевич пÿлĕме кашни кун мĕншĕн кĕрсе тухнин сăлтавне те, арăмĕ ман пата мĕн çăмăлпа килнине те тин ăнланса илтĕм.

Хĕрарăм сумкинчен хут туртса кăларчĕ те мана тыттарчĕ:

– Акă, заявленийĕ те пур, хам каласа çыртартăм, хамах илсе килтĕм. Тархасшăн ярăр ăçта та пулин. Ĕçре типсех ларать вăл. Кайтăр, ÿт хуштăр.

Йĕркеллĕ çынна кĕçех тÿлевсĕр путевка патăмăр. Анчах тепĕр куннех арăмĕ хăшăлтатса та çитрĕ.

– Мĕн туса хутăр эсир ман Çерука? – куççульпех йĕпенчĕ хĕрарăм. – Канни пулать-и кустăрма çинче уйăх халтăртатса çÿрени? Пушшех пĕтсе килет вăл унтан, пушшех типсе ларать. Эй, турă, кам шутласа кăларнă ăна, турпуйăса! Ямастăп! Санаторисĕр пуçне нимĕн те кирлĕ мар, çийĕнчен укçа тÿлесен те. Килтех лартăр. Акă путевки.

Ним тума та çук – çунчĕ путевка. Туристсен ушкăнĕ кăнтăр енне унсăрах кайса килчĕ.

Ĕçлетпĕр, пурăнатпăр. Кун иртет те çĕр иртет. Сергей Васильевич пуçне çĕклемесĕр мăшăлтатса ларать сĕтел хушшинче.

Кĕтмен-туман çĕртен пÿлĕм алăкĕнчен каллех Айаван арăмĕ курăнса кайрĕ. Кăштăрт хучĕ сĕтел çине заявлени. Хирĕçлемерĕмĕр, хальхинче те савăнтарма шутларăмăр Сергей Васильевича. Чăнчăн курортах яма йышăнтăмăр. Икĕ кун иртрĕ-и, виççĕ-и, арăмĕ персе те çитрĕ.

– Эй, тур-тур, – нĕшĕклетрĕ вăл, – пĕтрĕ пуç. Ман Çерука курорта ярсах тĕп тăвасшăн-и эсир? Пĕлеп эп курорт мĕнне. Кÿршĕри Хĕлип те курорт хыççăнах арăмĕнчен уйрăлчĕ. Хĕвеле, Уйăха асăнса калатăп: Çерук Хура тинĕс хĕрне каймасть! Лартăр килтех, хыткан кĕлеткипех. Эй, çырлах, кам шутласа кăларнă-ши çав курорта?..

Сергей Васильевич вунă хут та, çĕр хут та каçару ыйтрĕ пуль. Эпир шарламастпăр, ятламастпăр хисеплĕ çынна. Арăмĕ çеç пирĕнтен хăпмасть-ха, тата тепĕр заявлени парса хăварчĕ. Ăçта ямалла халь Айавана? Чĕнтĕмĕр ларăва. «Вăт, çапла-капла, вар-хырăм тÿрлетмелли санаторие кайма май пур»,– тетпĕр. Ку ухутах пулчĕ. Анчах эрне вĕçĕнче Сергей Васильевич арăмĕ путевкăна каллех сĕтел çине килсе хучĕ.

– Мăшкăллатăр ман Çерукран, – терĕ вăл. – Ăна сыхласа, сыватса, халăхшăн ĕçлеттерме пĕлместĕр. Ман Çерук...

– Мĕн пулчĕ тата? – ыйтатăп çакăнтан.

Хĕрарăм ниепле те лăпланаймасть, куççуль тăксах хĕремесленет:

– Кулни пулмасăр тата... – тарăхать вăл. – Çынсем санаторие песплат кайса килеççĕ. Ман Çерука... Канни пулать-и? Сывални пулать-и? Укçа çинчен шухăшласа вăл ÿт хушма мар, пушшех хăрăнса килĕ. Песплат путевкăллăх тар тăкман-и ман Çерук патшалăх ĕçĕнче? Ĕмĕрне çак архиврă ирттерчĕ.

...Ĕçлетпĕр, пурăнатпăр. Сут санталăк çурхи тум тăхăннă вăхăтра пÿлĕме Айаван арăмĕ çуталса çитсе кĕчĕ. Мана курсан, йăлл! кулса сарлака тутине ик еннелле сарса пăрахрĕ, пуçне тайса, сĕтел çине каллех заявлени кăларса хучĕ. Унта çапла çырнă: «Сире çуркунне ячĕпе саламлатăп, сывлăха çирĕплетмешкĕн çывăхри кану çурчĕсенчен пĕрне путевка уйăрса пама ыйтатăп. Арăм хирĕçлемест».

Шупашкарти кану çуртне кайма хисеплĕ ĕçчене путевка ухутах тупса патăмăр.

Айаван Атăл леш енчен вăхăтсăрах таврăннă-мĕн. Хутса ăшăтман павильонра шăнса чире кайнă. Ÿпке шыççипе виçĕ уйăх пульницара выртрĕ, ун хыççăн песплат санаторие те кайса килчĕ. Унтан килсен, кăшт вăхăтран ĕçе пычĕ те, пурне те васкамасăр, йĕркеллĕн, асăрханулăн алă тытса тухрĕ, хăюсăррăн пăхкаласа, «пурнатпăр, ай, аван» терĕ те, хăйсен пÿлĕмне кĕрсе çухалчĕ.

«Эх, Айван Айаван, – терĕ вара хут çĕлекен пĕр хĕрарăм. – Арçын ятне илтсе пурнать çав çĕр çинче...»

**В. КУЗЬМИН**

**МИКИШ Павăлĕ**

# Юлташран сивĕнтĕм

Пухăва хатĕрленетпĕр. Акционерсен пухăвне. Манăн та темиçе акци пур. Çавăнпа пулас пуху мана тўрременĕх пырса тивет. Унта пирĕн обществăна малашне кам ертсе пырасси паллă пулать. Хальхи директора кăларас сас-хура çўрет. Заводра ăçта кăна çитместĕн – пур çĕрте те çакăн çинчен калаçу. Манашкаллисем, хăйсен аллинче темиçешер акци тытаканнисем эппин, икшер-виçшерĕн пуçтарăнсанах сăмах пуху пирки пуçланать. Килте те, ĕçе кайнă е унтан таврăннă чухне троллейбус-автобусра та çав шухăш пуçран тухмасть. Халăх тем те пĕлет, тем çинчен те калаçать. Çавăн пек чухне ман юлташ, юнашар цехра ĕçлекен Мирон Иванч, сăмах-юмаха хăй аллине илет.

Юлташ тенĕрен, Мирон Иванч пирки çакна каласа парам. Ача чухне эпĕ унпа ялти шкулта пĕрле вĕреннĕ. Мирун вăл вăхăтра та пĕрле вĕренекенсен хушшинче хăйĕн хастарлăхĕпе палăратчĕ, пионерсен пухăвĕ сенче сăмах калатчĕ, стена хаçатне çыркаласа тăратчĕ. Тĕрлĕрен уявсенче е хаклă хăнасене кĕтсе илнĕ чухне ăна сăвăллă салам калаттаратчĕç.

Кайран та, институтран вĕренсе тухсан, инженер дипломĕсем илнĕ хыççăн, эпĕ унпа пĕр заводах лекрĕм. Кунта та вăл палăрма тытăнчĕ, ăна часах партбюрона суйларĕç. Парти историне вĕренекенсен кружокне ертсе пычĕ. Кĕскен каласан-тăк, заводра ăна пĕлмен-палламан çын çук тесен те йăнăш пулмĕ.

Самана улшăнсан, заводран акционер обществи туса хурсан, Мирон Иванч та ман пекех акционер пулса тăчĕ. Завочĕ малтанхи пекех, анчах ăна акционер обществи теме тытăнтăмăр...

– Пĕлетĕр-и, мĕн хăтланать пирĕн директор, – терĕ Мирон Иванч пĕррехинче пирус туртма пĕрле пухăнсан. – Совеç текенни чĕрне хури тăршшĕ те юлман унăн. Аслă ывăлне икĕ пўлĕмлĕ хваттер туса панă, Атăл леш енчи вăрманта виçĕ хутлă дача туса лартнă, малтанхи дачине пĕрремĕш арăмне парса хăварнă. Заводăн çăмăл автомашинине йўнĕ хакпа шăллĕне сутни çинчен илтнĕ ĕнтĕ эсир, тĕрĕссипе калас тăк, сутман, парнеленĕ. Пурлăха çапла салатакан çынна директорта хăварсан пире Турă каçармĕ...

Директора сивлесе каланине чылай илтме тиврĕ. Заводĕнче ĕç-пуç япăх пырать, пĕр эрне ĕçлетпĕр, ик эрне канатпăр, хамăр туса кăларакан продукцие туянакан çук, складрах купаланса выртать, ĕç укçине виçшер-тăватшар уйăх памаççĕ – çакă чуна ыраттарать.

Пуху пуласси виçĕ талăк юлсан ун ячĕпе ятарласа кăларнă хаçата цехсем тăрăх валеçсе çўрерĕç. Вăл акционерсене чĕнсе каланипе уçăлать. Унта пирĕн обществăн малашлăхĕ чаплă пуласси çинчен каланă, директор ăна аталантармалли программа туса хатĕрленĕ, завода пулăшакан пуян инвесторсем тупнă. Ĕç укçи парăмне çак уйăхрах татасси çинчен каланă. Çырура коллективăн чунне парса тăрăшакан директоршăн сасăлама чĕнсе каланă. Çыру айне вун пиллĕкĕн алă пуснă. Пăхатăп та, куç-пуç чарăлчĕ, вун пилĕк хушамат хушшинче ... Мирон Иванч Кравцов та пур! Хама хам ĕненмесĕр, хушаматсене тепĕр хут вуласа тухатăп – çук, йăнăшмастăп иккен, ман юлташах, ячĕ те, ашшĕ ячĕ те унăнах, цехри должноçĕ те ...

Питĕ хытă тарăхрăм. Мĕнле-ха капла, халăх умĕнче пĕр майлă çаптарать, куç хыçĕнче тепĕр еннелле пăхать. Мĕнле çав териех икĕ питленме пулать. Эпĕ харкашакан-çапкалашакан çын мар, çапах та çав вăхăтра Мирун юнашар пулас тăк тўпкелесе илеттĕмех ăна.

Тепĕр кунне, ĕçрен киле каяс умĕн, хайхискерне тĕл пултăм. Хам шухăша калама, намăслантарма тăтăм, анчах вăл çăвара уçма та памарĕ:

– Ятлатăн ĕнтĕ мана... Анчах эп айăплă мар.

– Мĕнле айăплă мар. Ху алă пуснă-çке!

– Пусасса пуснă та... Эс мĕн пулса иртнине нимĕн те пĕлместĕн, ахалех ятлатăн. Виçĕ сехет хушши калаçрĕ вăл манпа. Виçĕ сехет ўкĕтлерĕ...

– Кам? Мĕнле виçĕ сехет?

– Директор. Чĕнсе илчĕ те виçĕ сехет хушши калаçрĕ манпа. Ĕçрен кăларса ярассипе хăратрĕ.

– Ĕçрен кăларассипе хăратма виçĕ сехет кирлĕ пулчĕ-и? Ун пеккине калама пилĕк минут та ытлашшипех.

– Çапли çапла-ха... Урăххи çинчен те калаçу пулчĕ, – терĕ Мирун именчĕклĕн. – Директор хамăр коллектива йывăрлăхран кăлармашкăн хальхи лару-тăрура мирлĕн, килĕштерсе пурăнма кирли пирки нумай калаçрĕ. Хăй туса хатĕрленĕ программăпа паллаштарчĕ. Программи мана килĕшрĕ. «Эсĕ чылай хушă агитатор та, пропагандист та пулнă, халĕ те сан сăмахна çынсем итлеççĕ, – терĕ вăл. – Халăх, тĕпрен илсен, ман майлă, эсĕ мана хирĕç пулсан, халăха хирĕç пулатăн. Юрать-и халăха хирĕç пыма. Пуç йĕри-тавра шутласа пăх-ха». Килĕшме тиврĕ. Эп...

Мирун тата тем каласшăнччĕ, анчах ман сутăнчăк сăмахĕсене малалла итлес кăмăл пулмарĕ – алă султăм та çаврăнса утрăм.

Троллейбусра завод управленийĕнче ĕçлекен пĕлĕшĕме тĕл пултăм.

– Сан юлташу Мирон Иванч чĕнсе калани çине мĕншĕн алă пуснине пĕлетĕн-и? – ыйтрĕ вăл.

– Пĕлместĕп! Пĕлес те, илтес те килмест пўтсĕр çинчен!

– Директор ăна правлени йышне кĕртме сăмах панă. Ыранхи пухура сасăламалли бюллетеньре, курăн акă, унăн хушамачĕ те пулать...

Пухура камшăн мĕнле сасăламалли маншăн паллă пулчĕ.



**Николай Краснов (Йӗпреҫ районӗ) хатӗрленӗ**

1. Чунӗ ҫук, юнӗ ҫук, кайӑкран хытӑ вӗҫет (туп. юм.). 2. Килти кӑпшанкӑ. 3. Юрӑҫ та, чечек те. 4. Юрлаттаракан е ӑсран кӑларакан шӗвек. 5. Ӑна паттӑрсем илме тивӗҫеҫҫӗ. 6. Механизм пайӗ. 7. Пулӑ тытмалли карап. 8. Тӑшман самолечӗсене персе антаракан. 9. Чӑваш халӑх писателӗ. 10. А. Пушкин юмахӗнчи ылтӑн пулӑн юрӑхлӑ парни. 11. Кӑнтӑр енчен кӳрсе килнӗ ҫимӗҫ. 12. Ӑмӑртма юратакан. 13. Чӑваш космонавчӗ. 14. Йӗлтӗрпе ҫил пек вӗҫтерекен чӑваш, Олимп чемпионӗ. 15. Тӗрлӗ ҫимӗҫ хутӑшӑвӗнчен хатӗрленӗ салат. 16. Ҫыхӑну аппарачӗ. 17. Вӑл хими урокӗнче пуҫа ҫӗмӗрет. 18. Вырӑссен эстрада юрӑҫи. 19. Ӑна курсан лавккара куҫ алчӑрать. 20. ...-нчи винограднe кам татакан винават-ши вара? (юрӑран). 21. Ҫӗпӗрти хула. 22. Вӑйӑ ушкӑнӗн пуҫлӑхӗ.

## Иртнӗ номерте пичетленнӗ капкӑнкаҫмӑш хуравӗсем:

**Варринелле:** 1. Качака. 2. Калав. 3. Аромат. 4. Авизо. 5. Анатом. 6. Танго. 7. Микроб. 8. Натри. 9. Кинжал. 10. Ртуть.

**Ҫӑлтӑр йӗри-тавра:** 1-3. Кукша. 3-5. Атака. 5-7. Артем. 7-9. Мӑнук. 9-1. Курак.




Ищу работу с хорошей спецодеждой.




Ведется видеонаблюдение




– Сосед – директор магазина «Интим»...

О. Шавель, П. Козич, А. Мамаев ӳкерчӗкӗсем

Журналти ӳкерчӗксене www.cartoonbank.ru сайтран илнӗ